# Çитĕнӳсем хамăр алăра

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Пирĕн çĕршыв экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне хăвăртлатса пырас çул-йĕре суйласа илнĕ. Унăн тĕллевĕ – пĕтĕмпех çĕршыв тата çын ырлăхĕшĕн тăрăшасси, пурнăç ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси. Ял хуçалăхĕнче вăй хуракансем тăтăшах малалла ăнтăлнине, çавăнпа пысăк ăнăçу тунине палăртать Раççей Президенчĕ Владимир Путин.**

**Республика экономикин апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕпе, импорта улăштарассипе, сывă тата пахалăхлă апатланупа тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтусене татса пама пулăшакан тĕп пайсенчен пĕри вăл – агропромышленноç комплексĕ.**

**Ял хуçалăхĕ паян пысăк технологиллĕ, инвестицисем хывма илĕртекен отрасль шутланать. Вăл çирĕп те калкал аталанса пырать.**

**Чăваш Енри тавар туса илекенсен экологи тĕлĕшĕнчен таса шутланакан продукцине Раççейри тата ют çĕршывсенчи рыноксенче пысăка хурса хаклаççĕ.**

**Юлашки çулсенче республика фермерĕсем производствăн кал-кал ӳсĕмне тивĕçтерчĕç: тупăшсем 5 çул хушшинче 11 хут, майракаллă шултра выльăх шучĕ – 7 хут ытла, акса лартса илекен çĕрсен лаптăкĕ – 6, 5 хут, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçлекен çынсен шучĕ 4 хут ытла ӳснĕ.**

**Ял хуçалăх производстви ӳссе пынă лару-тăрура тирпейлекен отрасльти производство хăвачĕсене малалла вăйлатса пырасси, рынока «Сывă апатлану» брендпа туса кăларнă апат-çимĕçĕн çĕнĕ продукцисемпе тухасси чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевсенчен пĕри пулса тăрĕ кĕçех.**

**– Пурте пĕрле, алран-алла тытăнсан, кар тăрса хастар ĕçлесен, кирек епле йывăр ĕçе те çăмăллăнах пурнăçлама пултаратпăр, – тет Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев.**

**Кăçал Чăваш автономи облаçĕ 100 çул тултарнине паллă тăваççĕ. Çавăнпа халăхăн пурнăç условийĕсен шайне, тупăш илессине ӳстерсе пырассишĕн ырми-канми ĕçлемелле, тавралăха тирпей-илем кĕртмелле, наци проекчĕсене пурнăçлас хăвăртлăха тата динамикăна упраса хăвармалла.**

## Пысăк кăтартусемшĕн тăрăшакан фермер хуçалăхĕнче

Пирĕн районти предприятисенчен «Акконд-агро» АО, «Акконд-сĕт» ООО, «Тăвай кооперативĕ» ПО, С.Р.Илларионов, В.Г.Грачев хресчен-фермер хуçалăхĕсем аван аталаннă.

2019 çулта промышленноç таварĕсем тиесе ăсатнин, организацисем хăйсен вăйĕпе пурнăçланă ĕçсемпе услугăсен калăпăшĕ 403,9 млн тенкĕпе танлашнă, умĕнхи çулхипе танлаштарсан, ӳсĕм вăйра тăракан хаксемпе 126,4 процента çитнĕ.

Ваккăн сутакан таварсен калăпăшĕ, вак предприниматель субъекчĕсенне шута илмесĕр, 2019 çулта 327 млн тенкĕлĕх е 2018 çулхинчен 6, 4 процент пысăкрах пулнă.

Тăвай ен экономикин тĕп отраслĕ паянхи кун та ял хуçалăх производстви пулса тăрать. 2019 çулта унăн индексĕ пĕтĕм категори хуçалăхĕсене шута илсе 109,4 процентпа танлашнă. Иртнĕ çул тырă пĕтĕмпе 24,6 пин тонна е килĕшӳпе пăхнă планăн 111 проценчĕ чухлĕ пухса кĕртнĕ, вăтам тухăç гектар пуçне 24, 5 центнера çитнĕ. 2019 çулта 1393 тонна аш (2018 çулхин 99,8 проценчĕ), 18 897 тонна сĕт (103,5 процент) туса илнĕ. Ĕнесен продуктивлăхĕ малалла ӳснĕ, 6078 килограма хăпарнă, умĕнхи çулхинчен 308 килограмм хушăннă.

Районта чи малтан Кармалти Грачевсен хресчен фермер хуçалăхĕ йĕркеленнĕ, тесен те йăнăш мар. 2006 çулта «Слава» ЯХПК никĕсĕ çинче ĕçлеме пуçланă вĕсем.

Валентинпа Валерий Геннадьевичсем ялти йышлă çемьере çуралса ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ колхозра тăрăшнă, ачисене пĕлӳ парассишĕн ăнтăлнă.

В.Грачев Канашри медицина училищинчен вĕренсе тухнă. Малтан Шупашкарта строительсен больницинче ĕçленĕ. Ĕç укçи пысăках мар пулин те, тусанлă мар, çынпа пĕрле ĕçе каятăн, киле вăхăтра таврăнатăн. Çемьеленнĕ вăл, юратнă мăшăрĕ, Надежда Петровна Шупашкарти республика больницинче медсестрара ĕçлет. Виçĕ ача, Дима 20 çулта, тепри 17 çула çитнĕ, ăна Анна тесе чĕнеççĕ. Кĕçĕнни – София, кăçал шкула кайма хатĕрленет. Пиччĕшĕ Валентин шăллĕне яла таврăнса сысна ĕрчетес ĕçе тытăнма ӳкĕте кĕртнĕ, пулăшса пыма пулнă. Кивĕ ферма çуртне юсаса йĕркене кĕртнĕ хыççăн çине тăрсах сысна ĕрчетес ĕçе кӳлĕннĕ. Парăмшăн панă 50 сысна çĕнетнĕ объектра хăйсене аван туйнă.

Валерий Геннадьевич – ял хуçалăх ĕçне сума сăвакан арçын. Пысăк хавхаланулла, вăй-халĕ çăлкуç шывĕ пек тапса тăрать унра. Хăюллă та çирĕп тĕллевлĕскер малашлăха шанса пурăнать. Вăл кăмăллă, чунне уçса калаçать. Хăй хуçалăхĕнче ĕçлекенсемшĕн тăрăшать, кирлĕ пулсан пулăшать, вĕсене хисеплет, хаклать . Нăйкăшмасть нихăçан та ертӳçĕ, йывăрлăхсенчен шикленмест, вĕсене урăх çынсен ĕнси çине тиемест. Шутланă тĕллеве пурнăçлама хăюллăн пуçăнать.

Ĕçлеме тытăнсан тепĕр çулхине Муркаш районĕнчи «Свобода» хуçалăхран 105 пуç сысна ами туяннă вĕсем. Ĕç кал-кал пынă. Вăхăт иртнĕ май йыш пин пуçа çитнĕ. Патшалăха, таврари ялсенче пурăнакансене сысна ашĕпе, çурасемпе тивĕçтернĕ.

**– Сысна йышне 2009 çулта 200 яхăн пуçа çитертĕмĕр. Анчах кĕçех какай хакĕ чылай чакрĕ. Продукцие вырнаçтарма йывăрланчĕ, комбинатсем йӳнĕпе йышăнма пуçларĕç. Африка чуми хăратма тытăнчĕ, санитари требованийĕсем вăйлансах пычĕç. Çавăнпа мăйракаллă шултра выльăхсем пăхма пуçăнма шутларăмăр,** – аса илет Валерий Геннадьевич.

24 пушмак пăрупа 30 пуç çамрăк вăкăр кӳрсе килеççĕ. Çак йыша тепĕр çултан Комсомольски районĕнчи «Восток» хуçалăхра туяннă Голштин ăратĕнчи хура-ула пушмак пăрусем хушăннă. Кĕтӳ йышĕ хăвăрт ӳссе пынă. Çĕрпӳ, Елчĕк, Шупашкар районĕсенчен тепĕр 80 пуç пушмак пăру илсе килнĕ. Унтан кĕтӳ тата 17 пушмакпа пуянланнă. Çапла вара 4-5 çулта сăвакан ĕне йышне 150 пуçа çитернĕ.

Астăватăп-ха, выльăхсене лайăх условисенче усрас тĕллевпе 2012 çулта 200 пуç ĕне тата 40 пуç пăру вырнаçмаллăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç Кармалта, пăрулаттармалли уйрăм та пурччĕ унта. Инвестици проектне кĕске срокра пурнăçа кĕртнĕччĕ хресчен фермер хуçалăхĕнче. Витене хута янă çĕре çак йĕркесен авторне те хутшăнма тӳр килнĕччĕ. Паян-ыран пăруламалли ĕнесенчен ытларахăшĕ выртатчĕ, пĕр-икĕ кун каялла çуратнă тĕнчене килнĕ выльăхсене юнашарти уйрăма, çемçе сарă улăм çине вырттарнăччĕ, чӳрече витĕр сăнанăччĕ вĕсене, ун чухне уйрăма кĕртместчĕç.

Ĕнесене пăхакансене, ытти специалистсене канмалли тата çăвăнмалли, кăнтăрла хăйсене валли апат хатĕрлемелли пӳлĕмсем пурччĕ витере, сĕт пысăк холодильнике пухăнатчĕ.

Тепĕр темиçе çултан, хуçалăхри ĕç условийĕсене татах лайăхлатма вăй çитернĕ В.Грачев фермер. 2016 çулхи раштав уйăхĕнче 200 пуç вырнаçмалăх пăру вити алăкĕсене уçнă. Иккĕмĕш çĕнĕ объект хута кайни кунта сĕт туса илессине татах ӳстерме, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме май панă тата ытти те.

Хальхи вăхăтра Кармалти хресчен фермер хуçалăхĕнче тĕш тырă, сĕт тата ĕне ашĕ туса илессипе ĕçлеççĕ.

Хуçалăхăн паянхи куна – 933 пуç мăйракаллă шултра выльăх, çав шутра 220 пуç сăвакан ĕне.

Кармалсем çĕр ĕçлесе хатĕрлессине те тимлĕх уйăраççĕ. Пĕр пин гектар çĕр пур вĕсен, выльăх апачлĕх культурăсем – 585 гектар, тĕш тырă лаптăкĕ – 415 гектар.

Иртнĕ çул кунта 50,9 тонна аш, 1448,2 тонна сĕт туса илнĕ, кашни ĕнерен 7099 килограмм сĕт сунă. Ку вăл районта чи лайăх кăтартусенчен пĕри.

Ĕçлекенсен йышĕ пысăкланнине те палăртса хăвармалла. Темиçе çул каялла 16 çын тăрăшнă пулсан хуçалăхра, халĕ – 23. Машинăпа ĕне сăвакан операторсем – Надежда Димитриева, Марина Никитина, Наталия Терентьева, Юлия Хуснутдинова, Людмила Шуйкова, Алина Юзукова хăйсен ĕçне чунтан парăннă. Людмила Леонидовнапа Алина Анатольевна ку енĕпе вунă çул ытла ĕçлеççĕ, кулленхи тивĕçĕсене çӳллĕ шайра пурнăçлаççĕ. Дояркăсем выльăхсен çиллисене кашни хутĕнчех таса та ăшă шывпа çăваççĕ.

Çамрăк выльăхсем патĕнче те харпăр хăй ĕçĕсене пĕлсе пурнăçласа пыраççĕ Надежда Грачева, Раиса Гладкова, Ольга Сучкова, Зоя Шашкова пăру пăхакансем, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Ĕнесемпе пăрусем хăйсене мĕнле туйнипе Владимир Варламов ветврач интересленсех тăрать, кирлĕ чухне пулăшать.

Валентина Шашкова зоотехник питĕ çаврăнăçуллă, хăйĕн тивĕçĕсене вунă çул пурнăçлать Грачев хресчен фермер хуçалăхĕнче.

Наталия Кириллова заведующине витесенчи ĕçсене йĕркелесе пыма шаннă. Ĕнесене вăхăтра пĕтĕлентерессипе те тимлет тăрăшуллă хĕрарăм. «Пирĕн Наталия», – тесе хисеплеççĕ ăна пĕрле ĕçлекенсем.

Владимир Федоров скотник, Алексей Порфирьевпа Дмитрий Васильев хуралçăсем, Олег Шашковпа Петр Сергеев кладовщиксем те ăшă сăмаха тивĕçлĕ.

Çĕр ĕçĕнче вара Дмитриевпа Константинов Сергейсем, Валерий Чумышев, Николай Шашков трактористсем вăй хураççĕ.

Олеся Иванова бухгалтер шут ĕçне 4 çул аван туса пырать.

Иртнĕ çул, ак, ял хуçалăх ĕçченĕн тата продукцие тирпейлекен промышленноçра тăрăшакансен кунне уявланă чухне Грачев хресчен фермер хуçалăхĕнче тырă тухăçĕ районти вăтам кăтартуран чылай пысăк пулнине палăртрĕç. Николай Богачев комбайнер, Людмила Шуйкова доярка ячĕсене ырăпа асăнчĕç. Машинăпа ĕне сăвакан Алина

**(Малалли 4-мĕш стр.)**

КОНСТИТУЦИ: ШУХĂШСЕМ

**П.НИКИФОРОВ, Элпуçĕнчи вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен:**

Раççей Президенчĕ В.В.Путин Конституцин 68-мĕш статйине кĕртме палăртнă улшăнусем çĕршыври халăхсен чĕлхине тата культурине пырса тивеççĕ. Статьян 2-мĕш пайĕнче «Республикăсем хăйсен патшалăх чĕлхине туса хума, унпа вырăс чĕлхипе танах пур çĕрте те усă курма пултарни» çинчен каланă.

Раççейре пурăнакан кашни халăхăн хăйĕн чĕлхине упраса хăварма, ăна вĕренме, малалла аталантарма ирĕк пуррине те çырса хунă статьяра. Çакă, ман шутпа, питех те пĕлтерĕшлĕ. Уйрăмах паянхи, тăван чĕлхемĕрĕн шăпи нумайăшне хытах пăшăрхантаракан саманара.

Асăннă статьян тепĕр пайĕнче вара нумай нациллĕ халăхăн культури хăйне евĕр пуян еткерлĕх пулнине, патшалăх ăна упрассине, ăна аталанма тĕрев парассине палăртнă. Эппин, «Çĕр пин сăмахлă, çĕр пин юрă-кĕвĕллĕ тата çĕр пин тĕрĕллĕ» чăваш халăхĕ çĕр çинчен çухалмасса шанас килет.

## Иван Яковлевичăн çемйи

Чăвашсене çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев 1870 çулта Н.И.Ильминскийпе паллашнă. Вĕсен усрава илнĕ хĕрне Екатерина Алексеевна Бобровникована куç хывнă вăл. Тепĕр çичĕ çултан вĕсем çемье çавăрнă. Паллă педагог Иван Яковлевич Яковлев çуралнăранпа 172 çул çитнĕ май унăн кил-йышĕпе кĕскен паллаштарасшăн. Чăваш чĕлхин кунĕпе саламлатпăр вулакансене.

1878 çулта Яковлевсен пĕрремĕш ачи çутă тĕнчене килнĕ. Алексей ят панă ăна. Наталия, Лидия, Николай тата Александр çуралнă каярахпа. Наташăпа Саша çамрăклах пурнăçран уйрăлнă.

**Ачисем:** Алексей Иванович, 1878-1951 çулсенче пурăннă, историк, СССР патшалăх премийĕн лауреачĕ, СССР наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ. Николай Иванович (1883-1949) – сăрт-ту инженерĕ, çар конструкторĕ, кĕвĕ çыракан, Лидия Ивановна (1881-1942) –филолог, куçаруçă.

**Мăнукĕсем:** Ольга Алексеевна – истори наукисен кандидачĕ. Иван Алексеевич – физикăпа математика наукисен докторĕ, профессор. Екатерина Алексеевна – искусствоведени докторĕ. Анна Алексеевна – театр искусствин институчĕн профессорĕ.

**Мăнукĕсен ачисем:** Алла Борисовна Покровская – РФ халăх артисчĕ. Александр Борисович – Мускаври консерваторин концертмейстерĕ. Екатерина Всеволодовна – искусствоведени кандидачĕ. Владимир Всеволодович Павлов – РФ тава тивĕçлĕ артисчĕ. Варе Франсуаза – медицина професорĕ.

Чăвашсемшĕн тăрăшнă И.Яковлев вĕрентекенĕн йăхĕ вăрăма тăсăлать.

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

## Пысăк кăтартусемшĕн тăрăшакан фермер хуçалăхĕнче

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 3-мĕш стр.)**

Юзукова оператора - ЧР ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине, Николай Богачевпа Сергей Константинов механизаторсене, Зоя Алексеевнапа Людмила Леонидовнана «Тăвай районĕн чи лайăх ял хуçалăх ĕçченĕ – 2019» ят пачĕç.

Фермер хăйĕн работникĕсене аван хавхалантарать, пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи 21 пин тенкĕпе танлашать вĕсен.

Юлашки виçĕ çул кăтартăвĕсене илсен, пĕлтĕр, 2016 çулхипе танлаштарсан, сĕт туса илесси – 117 процента, пĕр ĕне пуçне продуктивлăх 101 процента çитнĕ, 7099 килогрампа танлашнă. Мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ 134 процента, ĕнесем – 116 процента, выльăхсен талăкри ӳтхушаслăх 114 процента çитнĕ.

Кăçал пĕрремĕш кварталта 5027 центнер сĕт сунă, 110,5 центнер ашкакай туса илнĕ.

Фермер хуçалăхĕн уй-хирĕнчи ĕçсене ытларах çĕнĕ техникăпа пурнăçлаççĕ. МТЗ-82, Т-150 тракторсем, выльăх апачĕ пухса кĕртекен комбайн, «Вектор» тĕш тырă комбайнĕ пур. Культиваторсем, дисклă йывăр сӳресем, сарлака ретлĕ сеялкăсем, косилкăсем, пресс-подборщиксем, утă тавăракан сӳре, кормораздатчик тата ытти те ĕçе хатĕр.

Нумай çул ӳсекен курăксене минераллă удобрени парса апатлантарассипе кăçал районта чи малтан вĕçленĕ Кармалти туслă коллектив. «Валерий Чумышевпа Сергей Константинов механизаторсем хăйсене шанса панă техникăна аван ĕçлеттерчĕç. Тĕш тырă культурисене акма пуçлаймарăмăр-ха. Çĕр пулса çитсен, уй-хирте шăплăх хускалĕ, тăватçĕр ытла гектар çĕр çинчи ĕçсене кĕске срокра вĕçлĕпĕр», – тет Валерий Геннадьевич Грачев.

**А.НИКИТИНА. Архиври сăн ӳкерчĕксем.**

## Экстремистла материалсемшĕн

**Сиенлĕ Интернет-сайтсене йĕркелекенсем çынсен, уйрăмах çамрăксен ăс-тăнне хавшатас, психикине япăх витĕм кӳрес, халăхсене хирĕçтерес тĕллевсене тĕп вырăна хураççĕ.**

Интернет уçлăхĕнчи страницăсем çине наци атрибутикине тата экстремистла организацисен паллисене вырнаçтаракансене, вĕсене халăх хушшинче сарас тĕлĕшпе хатĕрлекенсене тата упракансене айăплав кĕтет. Экстремизм çулне пӳлес тĕллевпе федераци шайĕнче «экстремистла ĕç-хĕле хирĕç тăрасси çинчен» закон та йышăннă, Раççейри экстремистла материалсен пĕрлехи пĕтĕм списконе палăртнă. Унпа minjust.ru сайтра паллашма пулать.

РФ административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан 20.29 статйипе килĕшӳллĕн асăннă йĕркесене пăснăшăн уйрăм граждансен оборудованине конфискацилесе штраф пама е арестлеме пултараççĕ. Предприяти-организацисен штраф сумми 100 пин тенкĕрен пуçласа 1 млн тенкĕ таран пулма пултарать.

**Д.ИВАНОВ.**

САНĂН ÇЫННУСЕМ, ТĂВАЙ ЕН

## Пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ

♦ Г.Ф.Степанова вĕрентекен

Галина Федоровна Степанова Енĕш Нăрваш шкулĕнче 2000 çултанпа ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Унччен 13 çул пуçламăш классен ачисене пĕлӳ тĕнчинче малтанхи утăмсем тума пулăшнă. 5 çул шкул директорĕнче, 8 çул унăн çумĕнче вăй хунă. Анчах чун-чĕри чăвашлăх еннех туртать. Ачасене тăван чĕлхене, литературăна, тăван халăхăн ырă йăли-йĕркисене упрама, малалла аталантарса пыма вĕрентме пĕтĕм вăй-халне парать.

Уроксем хыççăн та вĕренекенсемпе нумай ĕçлет. Олимпиадăсене, ăслăлăх конференцийĕсене, конкурссемпе фестивальсене хатĕрленеççĕ. Çакă вара ырă çимĕçĕсемпе савăнтарать. Çулленех муниципалитет тапхăрĕнче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиадисенче унăн вĕренекенĕсем тарăн пĕлĕвĕпе анлă тавракурăмне кăтартаççĕ, республикăри тупăшура та чи маттуррисен ретĕнче куратăн вĕсене.

Тĕслĕхрен, «Упрар тăван чĕлхемĕре» ораторсен муниципалитет шайĕнчи конкурсра тата «Çеçпĕл çеçкисем» фестивальте Регина Лукина 2-мĕш, Анастасия Павлова 1-мĕш вырăнсем йышăнчĕç. «Манăн чи-чи...» республикăри фестивальте Мария Павлова çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Тата вăлах чăваш чĕлхипе, литературипе тата тăван ен культурипе регионсен хушшинчи интернет-олимпиадăра призерсен йышне кĕчĕ.

Çапла 33 çул çитет Галина Федоровна кун-çулне шкул ĕçĕпе çыхăнтарнăранпа. Ырă кăмăллă та сăпайлăскере ял-йышра хисеплеççĕ. Общество ĕçĕнче те пуçарулăхне кăтартать вăл. «Хăй пултаруллăран вĕренекенĕсем те маттур»,–теççĕ ĕçтешĕсем Г.Степанова вĕрентекен çинчен. Кăçал «Районти чи лайăх класс ертӳçи» конкурсра çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ вăл, Тăвай ен чысне Шупашкара кайса ăнăçлă хӳтĕлерĕ.

Пушă вăхăтра вулама, çыхма кăмăллать. Чун киленĕçĕ вара – сăвăсем шăрçаласси. Иртнĕ çул чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 120 çул çитнине халалланă республика шайĕнчи «Утатпăр Çеçпĕл çулĕпе» сăвăсен конкурсĕнче Г.Ф.Степанова иккĕмĕш вырăна тухнă. «Тăван чĕлхе вăрттăнлăхĕсем» интернет-конкурсра, «Чăвашла янăратăр уяв» сценарисен конкурсĕнче, регонсем хушшинчи «Хавхалану» фестивальте призерсен йышне кĕме пултарнă.

«Хальлĕхе çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçеймерĕм-ха, апла пулсан малалла ĕçлеме тĕллев пур тесе шутлатăп, ачасен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатăп вара»,– тет Галина Федоровна вĕрентекен.

**А.ГРИГОРЬЕВА.**
**Енĕш Нăрваш ялĕ.**

**Паян эпир Галина Степанова çырнă «Çеçпĕле» сăввине пичетлетпĕр. Унăн хайлавне республикăри конкурсра иккĕмĕш вырăнпа хакланă.**

## Çеçпĕле

Ачалăху килмерĕ саншăн çăмăл,
Нумай эс куртăн хурапа шурне.
Ача чухнех сусăрланса-çке юлтăн,
Чăтса ирттертĕн тăлăх нушине.
Шăхасанта пит тăрăшса вĕрентĕн,
Пĕрремĕш сăвă çыртăн çак шкулта.
Пуш вăхăтра вулавăша çӳрерĕн,
Журнал та эс пултартăн кăларма.
Йывăрлăха çемйӳ кĕрсе ӳксессĕн
Шеллерĕн чĕререн ху аннӳне.
Шăхасанта çыруçăра ĕçлерĕн,
Çапах та пăрахмарăн вĕренме.
Ĕçлерĕн, сывлăхна та шеллемерĕн,
Пит селĕм шăрçаларăн сăвăсем.
Шанса эс тăнă пĕр иккеленмесĕр,
Çутта тухаççĕ пурпĕр чăвашсем
Чăваш чĕлхин, чăваш ачин шăпийĕ
Самантлăха канăç паман чунна.
Чăваш хĕрарăмне те пит шеллерĕн,
Ун сăнарне кăтартрăн сăвăра.
Анчах шăпу синкерлĕ килсе тухрĕ,
Ура хума пултарчĕç чăвашрах.
Элеклесе таса ятна таптарĕç,
Çут ĕмĕте кăкларĕç кăлăхах.
Пĕр маснă чĕлĕ çыпăçаймĕ тенĕн
Тухса эс кайрăн Украинăна.
Унта тĕплентĕн, юлташсем те тупрăн,
Анчах та манаймарăн халăхна.
Ытла та сĕмсĕр, пĕртте хĕрхенмесĕр
Хăрушă вилĕм килчĕ васкаса.
Пиртен вăл уйăрчĕ ним шеллемесĕр
Кăвар чĕреллĕ çамрăк поэта.
Хыт утăмлă ентешĕм, таймапуçăм!
Эс чăннипех кăтартрăн халăхна.
Янрать чăваш чĕлхи, тăван чĕлхеçĕм
Кунсеренех пире вăй-хал парса.